Шалти ĕçсен пайĕнче

«Йĕркелĕхшĕн тăрăшатпăр»

Евгений Иванович Плечов кăçалхи февраль уйăхĕнчен пуçласа районти шалти ĕçсен пайне ертсе пыма пуçларĕ. Паян вăл – редакци хăни.

– Евгений Иванович, çулталăк пуçланнăранпа мĕнле преступленисем ытларах сарăлни пирки калама пултаратăр? Вĕсене уçса парасси еплерех пулса пырать?

– Çулталăк пуçланнăранпа иртнĕ 4 уйăх хушшинче районта пурĕ 160 преступлени (пĕлтĕр – 185 пулнă. Вĕсене уçса парасси кăшт хăпарни савăнтарать. Çак тапхăрта вăл 83,7 процентпа (79 процент) танлашрĕ.

Преступленисенчен ытларахăшĕ – вăрă ĕçĕсем (65), çынна хĕнени (26) тата йывăр преступленисем (22). Пирĕн пай сотрудникĕсем тăрăшнипе вăрă ĕçĕпе çыхăннă преступленисене уçса парасси ӳсрĕ (67,9 процент, пĕлтĕр – 10 процент сахалрах). Хĕнесси вара – ытларах çемьесенче тухакан пулăм. Нумай чухне сăлтавĕ эрех ĕçнинчен пуçланать. Кунта пĕр-пĕрне вĕлерессипе хăратни те юнашарах. Çакнашкал тĕслĕх 10 пулнă та ĕнтĕ. Чăтăмлăх, лăпкăлăх, сăпайлăх тени çынсенче сахаллансах пырать пулас. Çавăнпах йывăр преступленисем шутне кĕрекен вăйпа усă курса тепĕр çынна сиен кӳни те, хваттер çаратасси те сахалах мар.

Май уйăхĕн 24 кунĕнче пурĕ 52 преступлени тунине палăртрăмăр. Вĕсенчен 50-шне уçса панă.

– Мĕнле преступленисем çинче уйрăммăн чарăнса тăма пултаратăр?

– Уйрăм преступленисене илсе кăтартас пулсан, Шарпаш ялĕ çывăхĕнчи «Дубрава» дачăсен коллективлă хуçалăхĕнче дача çуртне юриех чĕртсе янă виçĕ тĕслĕх пулнине асăнса хăвармалла. Ку преступленисем çак тăрăхри çамрăксемпе çыхăннă. Аслисем енчен вăхăтра çирĕплĕх пулманнипе яшсем хăйсене хăйсем ура хунă тĕслĕхсем сахал мар пулаççĕ çав. Акă районти пĕр шкул директорĕн автомашинине вăрланă тĕслĕх те ӳсĕр çамрăкпа çыхăннă. Машинăна хуçине çийĕнчех тавăрса панă ĕнтĕ.

Нумаях пулмасть пĕр арçын хăй тунă пăшал усранине тупса палăртрăмăр. Çакă районти çынсен хăрушсăрлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе калас килет.

Асăннă тапхăрта саккуна пăсса наркотиксем усранине е вĕсене сутнине тупса палăртма май килмерĕ. Ку енĕпе вăйлăрах ĕçлемелле.

– Кашни ял тăрăхĕнчех участковăй милиционерсем ĕçлеççĕ. Вĕсемпе халăх хушшинче тачă çыхăну пур-и? Теприсем хăйсен участковăйне палламаççĕ те.

– 16 ял тăрăхĕнче 15 участковăй милиционер хăйсен тивĕçне пурнăçлать. Кăçалхи апрель уйăхĕнчен пуçласа вĕсем çирĕплетнĕ ял тăрăхĕсенче 3-шер кун ĕçлеççĕ. Шалти ĕçсен пайĕнче учетра тăракансемпе те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе те, ытти çынсемпе те тачă çыхăну кирлĕ. Ку ĕç йĕркеленсе пырать.

Эрнере икĕ ял тăрăхĕнче профилактика кунĕсем ирттеретпĕр. Кил умĕнчи çӳпçап купаланса выртнинчен пуçласа спиртлă шĕвек сутни таранах тĕрĕслетпĕр. Учетра тăраканнисемпе ӳсĕр çынсене те куçран вĕçертместпĕр. Вырăнтах протоколсем çыратпăр. Çапла майпа çынсем пире кулленхи ĕçре кураççĕ те. Пирĕн паянхи тĕллев – ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, унта пурăнакансемпе çирĕп çыхăну йĕркелесе ярса ăна тытса пырасси.

– Обществăлла вырăнсенче ӳсĕр çынсене тата вĕсене çак вырăнсенче йĕркене сыхлакан милиционерсем шалти ĕçсен пайне илсе кайнине пурте пĕлетпĕр. Хăçан, тĕрĕсрех каласан, ӳсĕр çынра мĕнле енсем палăрсан çапла тума ирĕк пур?

– Ӳсĕр çын – çынлăхăн лайăх енĕсене пĕтерекенĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн вара пирĕн сотрудниксен вĕсене çак енсем палăрнипе обществăран хăтарма ирĕк пур: эрех шăрши кĕрет, çи-пуçĕ тирпейсĕр, сулланса утать тата уçăмсăр, ăнланусăр калаçу пулсан.

– Шалти ĕçсен пайĕн коллективĕ тата унăн ĕç дисциплини çинчен кăштах каласа парсамăрччĕ.

– Коллектив пĕчĕккĕ мар, çĕр ытла çын. Сотрудниксем хушшинче тĕрлĕ ӳсĕмрисем пур, çамрăксем сахал мар. Еç дисциплинине пăсакансене хамăрăн вăйпа саккунпа килĕшӳллĕн тӳрех явап тыттаратпăр. Кăçал пĕр сотрудника ĕçрен те хăтармалла пулса тухрĕ. Каламалла, дисциплина çирĕп. Ăна пăсакансене, шалти ĕçсен пайĕн авторитетне хисеплеменнисене, унăн шайне чакаракансене ĕçре тытса тăмастпăр. Мĕншĕн тесен çакнашкаллисене пула çынсен шанчăкĕ çухалма пултарать.

– Çынсем вара районти шалти ĕçсен пайне шанаççĕ-и?

– Кашни çулах Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствинчен килсе тĕрĕслеççĕ çакна. Ятарлă мониторинг ирттереççĕ. Пĕлтĕрхи тĕрĕслев районта пурăнакансенчен 60 ытла проценчĕ милиция шаннине пĕлтернĕ. Кăçал кун пек тĕрĕслев пулман-ха.

– Пайăн хăш уйрăмĕ хăйĕн ĕçĕпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулма пултарать?

– Следстви уйрăмĕ теме пулать. Вĕсем тачă çыхăнса, хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Пурте хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен специалистсем.

– Специалистсем тенĕрен. Мĕнле пĕлӳ илнисем ĕçлеççĕ шалти ĕçсен пайĕнче?

– Офицер должноçне юридици пĕлĕвне илнисене çеç йышăнатпăр. Педагогика пĕлĕвне илнисем çул çитменнисемпе ĕçлеме пултараççĕ. Анчах паянхи куна ку енĕпе пирĕн штат тулнă ĕнтĕ. Сотрудниксем, уйрăмах çамрăксем, малалла вĕренес теççĕ пулсан, хирĕç каймастпăр.

– Хăвăр тата мĕн хушса каласшăн?

– Юридици пĕлĕвне илнĕ 35 çула çитменнисене районти шалти ĕçсен пайне ĕçлеме чĕнетĕп. Паллах, офицер должноçĕнчи ĕçе туса пыма. Вăтам пĕлӳллисем те, милиционер ĕçне килĕштереççĕ пулсан, пирĕн пата килме пултараççĕ. Паянхи кун çак вакансисем пур. Кадрсемпе ĕçлекен уйрăмра çакăн пирки тĕплĕнрех ăнлантарĕç.

Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.

Паян – Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕ

Пурнăçпа тан пыраççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Апрельте эпир район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕпе пĕрле «Чĕвĕлти чăваш чĕлхи» ятпа Чăваш чĕлхин кунне халалласа уяв ирттертĕмĕр. Март уйăхĕнче Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти библиотекăсенче шкул ачисем литераторпа, журналистпа В. Петровскипе тĕл пулчĕç.

Тăван тавралăха тĕпчесе пĕлес ĕçе пысăк тимлĕх уйăратпăр. 2009 çулта ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотека «Муркаш районĕнчи писательсемпе тавра пĕлӳçĕсем» библиографи указательне пичетлесе кăларчĕ. Районти библиотекăсенчи презентацисене писательсемпе тавра пĕлӳçĕсем Н.Л. Яковлев, Е.Е. Ерагин, И.Д. Вязов, Л.П. Сергеев, О. Прокопьев журналист, Р. Соловьева поэтесса хутшăнчĕç.

Пирĕн пысăк тивĕçсенчен пĕри – ачасене кĕнекесем вулама явăçтарасси. Ку енĕпе тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар ирттеретпĕр. Кусем вĕсем фестивальсем, пултарулăх конкурсĕсем, çемье уявĕсем, эрудитсен конкурсĕсем.

Библиотекăсенче пĕрлешӳсем те йĕркеленĕ. Вĕсем: Мăн Сĕнтĕрте «Подросток», Муркашра «Доверие» тата «Молодая семья», пур библиотекăсенче те «Мой компьютер», Мăн Сĕнтĕрте «Шашки-шахматы» т. ыт. те.

Хальхи вăхăтра районти библиотекăсенче 51 специалист вăй хурать. Вĕсенчен 56,9 проценчĕ аслă пĕлӳ илнĕ. Библиотекарьсен квалификацине ӳстерес ĕç малалла пырать. Семинарсем, форумсем, çавра сĕтелсем, квалификацие ӳстермелли курссем йĕркелесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çамрăк библиотекарьсен канашне йĕркеленĕ, пуçласа ĕçе кӳлĕнекен специалистсен шкулĕ ĕçлет.

Хисеплĕ библиотекарьсем! Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп! Пурсăра та сывлăх, ăнăçу сунатăп.

Т. КОРОЛЬКОВА, ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотека директорĕ.

Культура ыйтăвĕсемпе

Япаласен ĕмĕрне музейра тăсăпăр

Пурнăç малаллах шăвать, çĕнелсех пырать. Çавăнпа та кашни çыннăнах йăлара тахçан кирлĕ пулнă япаласем пăрахăça тухаççĕ. Вĕсен ĕмĕрне вара музейсенче тăсма май пур. Акă районти историпе краеведени музейĕнче çак уйăх вĕçленичченех «Музее парнеле» акци пырать. Çынсем пырса панă япаласем малашнехи ăрусене историпе культурăна тĕпчес, пĕлес ыйтусенче пулăшăç. Районти 37 № пушар чаçĕ, Муркашри почтамт тата ыттисем те акцин пĕрремĕш кунĕсенчех музее тĕрлĕ япаласем парнелесе питĕ пархатарлă ĕç турĕç.

Экспонатсем нумай пулни вара тĕрлĕ тематикăллă мероприятисем ирттерме, ачасене ĕлĕкхи пурнăçпа паллаштарма майсем татах та нумайрах туса парать. Иртнĕ кунсенче музейра «Çăкăр – пуç, çемье – пуçламăш» ятпа уяв мероприятийĕ ирттертĕмĕр. Ачасене халĕ пекарньăсенче çăкăр мĕнле пĕçернине «Моргауши – Хлеб» пĕрлешӳ технологĕ Л. Звонкова каласа пачĕ. Килти условисенче çăкăр пĕçерессипе В. Пикузова, З. Гаврилова, Н. Ковалева тата А. Николаева паллаштарчĕç. Вĕсемпе пĕрле ачасем çăкăр пĕçерсе те пăхрĕç. Çак мероприятие интереслĕрех ирттерме музей экспоначĕсем пулăшрĕç. Апла пулсан килте кирлĕ мар, анчах та малашлăхшăн пĕлтерĕшлĕ пулма пултаракан япаласене пирĕн пата илсе килме васкăр.

Е. РОМАНОВА, районти историпе краеведени музейĕн ертӳçи.

Сăн ӳкерчĕкре: çăкăр çапларах пулать.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Скидка на окна до 25 %. Весь май москитная сетка в ПОДАРОК!

Продается деревянный дом с обшивкой из кирпича на вывоз в д. Сятракасы, ул. Победы, д. 35. Тел.: 8-937-371-78-57, Людмила.

Предлагаем услуги по ремонту стиральных машин-автоматов любой сложности. Вывоз техники в мастерскую и доставку на дом берем на себя. Обращаться по тел.: 8-937-371-11-03, 8-937-372-03-76 (здание дома быта, парикмахерская «Шарм»).

Ĕне, сурăх чĕрĕ виçепе туянатăп. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63.

30 мая с 9-00 часов до 18-00 часов в ДК с. Б. Сундырь, с 10-00 часов до 17-00 часов в ДК с. Моргауши состоится распродажа летней обуви, комплектов постельного белья, все по 300 рублей. В продаже джинсовая одежда по низким ценам.

Военный билет серии АВ № 0515331, выданный военным комиссариатом Ленинского района г. Чебоксары 15.04.1999 г. на имя Пуанова Сергея Вячеславовича, считать недействительным.

Продаю земельный участок площадью 40 соток под строительство в с. Б. Сундырь. Тел.: 8-905-027-05-07.

Администрация Моргаушского района объявляет прием заявок на размещение торговых точек в день проведения районного праздника «Акатуй», который состоится 12 июня 2009 года на Ландышской поляне.

Торговые места будут предоставляться на следующих условиях:

1. Осуществление торговой деятельности с торговой палатки.

2. Праздничное оформление торговой точки.

3. Наличие урны для твердых отходов.

4. Наличие оформленной заявки.

Плата за земельный участок составит 80 рублей за 1 квадратный метр.

Количество торговых мест ограничено.

Заявки принимаются до 11 июня 2009 года в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района (кабинет № 312) с 9.00 ч. до 16.00 ч. ежедневно, кроме выходных дней. Обеденный перерыв с 12.00 до 13.00 часов, телефон для справок 62-2-66.

Участницы долевой собственности Бычкова Серафима Михайловна, 26.07.1925 года рождения, Яргунина Ираида Александровна, 23.02.1956 года рождения, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Верхний Томлай, ул. Бычкова, д. 12, сообщают о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.

2. Бычковой Серафиме Михайловне, Яргуниной Ираиде Александровне, проживающим по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Верхний Томлай, ул. Бычкова, д. 12.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории земли населенных пунктов с кадастровым номером 21:17:280602:52, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Кадыкой, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:280602, для содержания зданий и сооружений, площадью 20 кв. м.

Заявки принимаются в течении месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:080901:995, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Новая Юнга», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:080901, для растениеводства и дальнейшей переработки продукции, площадью 12187 кв. м.

Заявки принимаются в течении месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:130501:521, местоположение: участок расположен примерно в 550 м по направлению на юго-запад от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Центральная, д. 9 участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:130501, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 103800 кв. м.

Заявки принимаются в течении месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Сыпайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта пуçламăш классен учителĕ пулса ĕçлекен С.А. Попован ашшĕ

Александр Порфирьевич КОЛЕСНИКОВ

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 26.05.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3850.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.